Шупашкар район хаçачĕ ❋ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

151 (8837) № ❋ 2003 çулхи декабрĕн (раштав уйăхĕн) 30-мĕшĕ. Ытлари кун ❋ Хакĕ ирĕклĕ

# *ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ ПЫСĂК САЛАМ!*

## РАЙОНĂН ПУЛАСЛĂХĔ ПЫСĂК

**Çулталăк вĕçленчĕ, япăх иртрĕ-и вăл, е çитĕнӳсемпе, халь тин нимех те туса ĕлкĕрейместпĕр, ыран каç 12 сехетре Кремль башни çинчи сехет пĕтĕм çĕршыва Çĕнĕ 2004-мĕш çул çитнине пĕлтерĕ. Паян - пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ. Çакна шута илсе кăçал та хаçатăн тĕп редакторĕ Шупашкар район ертӳçипе курнăçма васкарĕ. Тунă ĕçсемпе малашнехи плансем çинчен каласа пама ыйтрĕ.**

***- Анатолий Пантелеймонович, каласа парсамăр, иртсе пыракан çулталăка мĕнле кăмăл-туйăмпа ăсатса ятăр?***

- Паллах, 2003 çулта тата ытларах тумаллаччĕ-тĕр, çапах та мĕн туни çинчен калас-тăк, халăх умĕнче хамăр çине илнĕ тĕллевсене пурнăçланă тесе калама юрать.

Ку çул - газификацие вĕçлемелли юлашки икĕ çултан пĕрремĕшĕ пулчĕ. Çавăнпа ку тĕлĕшпе уйрăмах пысăк ĕç палăртнăччĕ. Тĕллеве иртерсех пурнăçлани савăнтарать. Цифрăсем илсе кăтартам: газ пăрăхĕсен вăрăмăшне 90 километра çитертĕмĕр, пĕлтĕр 42 пулнă. Енчен те пĕлтĕр 506 кил-çурта газ кĕртнĕ плсан кăçал икĕ хут ытларах: пин ытла çемьене кăвак çулăм илсе çитертĕмĕр. Газсăр ялсем халь нумай юлмарĕç. Çитес çулта газификаци ĕçĕ-хĕлне тата хăш-пĕр район пĕтерĕ, анчах эпир пĕрремĕшсем пуласса шанса тăратăп. Подряд организацийĕсем кăçал маларах расхутланă 771 пин тенкĕ укçана халăха тавăрса пачĕç.

***- Газификаци - ял аталанăвĕн кăтартăвĕсенчен пĕри. Апла, кăçал республикăмăрта ялăн социаллă аталанăвĕ темăпа иртнĕ конференцине килнисенчен пĕр пысăк пайĕ Шупашкар районĕнче пулни пачах та ăнсăртран мар. Район чăннипех ăнăçлă аталанать. Мана пуринчен ытла социаллă кăткăс обьекта - Ишлейри 3 хутлă поликлиникăна пĕр çул хушшинче никĕс хывса ĕçлеттерсе яни интереслĕ пулчĕ.***

- Ку çурта пĕр çул хушшинче хăпартса поликлиникăна ĕçлеттерсе ятăпăр тесе малтанах каланăччĕ, анчах çакна никамах та ĕненмерĕ. Халь акă пурте кураççĕ, эпир йăнăшман. Строительство ĕçĕ-хĕлне хамăр бюджет вăйĕпе турăмăр, оборудовани - республикăран пулчĕ. 10 çул хушшинче районта кун пек обьект хута яман. Тĕрĕссипе, вăл маншăн та, район администрацийĕшĕн те лайăх экзамен пулчĕ. Эпир ăна ăнăçлă тытрăмăр тесе шутлатăп.

***- Пĕлтерĕшлĕ стройкăсенчен тата мĕн пирки каланă пулăттăр?***

- Кӳкеçре, уйрăмах нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем шыв çуккипе аптрани часчас пулнă. Мĕншĕн тесен хуларан Лапсар урлă килекен шыв пăрăхĕ çурăла-çурăла каятчĕ. Малашне кун пек инкек пулмĕ.



❋ **А.П.Князев (сулахайри) ЧР социаллă политика министрĕпе П.С.Красновпа, ЧР Президенчĕпе Н.В.Федоровпа тата РФ ĕçлев министрĕпе А.П.Починокпа Хыркассинчи ветерансен çуртĕнче ваттисемпе курнăçнă хыççăн журналистсемпе калаçаççĕ.**

Кӳкеçе кăçал çĕнĕ - запас лини аш-какай комбиначĕ урлă илсе килтĕмĕр. Ăна та хăвăрт - виçĕ уйăхрах туса пĕтернĕ. Кӳкеç поселокне, унсăр пуçне, çĕр айĕнчи шывпа тивĕçтерес енĕпе ĕçлесси малалла пырать. Ăçтан таса шыв илмеллине халь тупрăмăр. Тĕп ĕçе çитес çул тăвăпăр. Пурĕ вăл 9 миллион тенке яхăн тăрать.

***- Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, районта социаллă çурт-йĕр тĕлĕшпе Кӳкеçре тата Кăшавăшра халь-халь 2 çурт хута каймалла. Район аталанса пыни куç умĕнчех. Нихăш районта та врач офисĕсемсĕр, модельлĕ библиотекăсемсĕр пуçне пысăк обьектсем янине асăрхама çук. Çакнашкал ыйту, Анатолий Пантелеймонович. Укçа-тенкĕ тĕлĕшпе, районсен калăпăшне шута илсен, пур çĕрте те бюджетсем пĕрешкел. Никама та ытлашши укçа уйăрса хăварма ирĕк памаççĕ. Апла, сирĕн вăрттăнлăхăр мĕнре-ха?***

- Ку вăрттăнлăха пурте пĕлеççĕ, тен, усă курма тĕрлĕрен усă куратпăр. Калăпăр, республикăмăрта яланах мĕнле те пулин ĕç пур пире валли. Районти укçа-тенкĕ е финанс çаврăнăшне ансатлатасси те: ăна пурте ăнланмалла усă та йĕркеллĕ тăвасси те çав шутран. Унсăр пуçне энергие перекетлес енĕпе кам мĕнле ĕçленине пăхма пултараççĕ т.ыт.те. Сăмахран, муниципалитет финансне лайăх йĕркелесе ярас тĕлĕшпе палăртнă конкурсра пирĕн район республикăра иккĕмĕш вырăн йышăнса 19 миллион тенкĕ укçана тивĕçлĕ пулчĕ. Ку укçан пĕр пайĕ шăпах Ишлей поликлиникине çĕклеме кайрĕ. Ăна туни пире район пĕлтерĕшлĕ иккĕмĕш больницăна хута яма май пачĕ. Укçан тепĕр пайĕ Кӳкеçе çĕр айĕнчи шывпа тивĕçтерес ĕçе пуçăнма çул уçрĕ. Тата ытти те.

Республикăра пĕлтернĕ «Энерги перекетлес ĕçхĕл» программăна кĕме пултартăмăр. Вăл пире Ишлейри тухăçлă ĕçлекен котельнăя хута яма май пачĕ. Тренккассинчи котельнăя туса пĕтернĕпе пĕрех, поселокра теплотрассăна хута ятăпăр. Урăхла каласан, хамăрăн чĕрĕрех те ăслăрах пулмалла. Паянхи куна района валли республикăран килекен хушма 50 миллион тенкĕ укçана хӳтĕлесе хăварнă. Унсăр пуçне пирĕн пата федераци хыснинчен килмелли укçа-тенкĕ валли те çул уçма тăрăшатпăр. Сăмахран, çитес çул Пĕтĕм Раççейри ялти вăйăсене Кӳкеçре ирттерме палăртни хăех поселока хăтлăрах тума май паракан мул илсе килĕ. Пĕрех ку укçа-тенкĕ халăх пуянлăхĕ, апла мĕншĕн пирĕн çынсене валли ĕçлемелле мар унăн? Унччен кунашкалли пулман-тăк, малашне пулатех тесе шутлатăп. Тепĕр хут калатăп, хамăрăн çеç ăслă пулмалла.

***- Чăн-чăн хальхи вăхăтри ертӳçĕ пулас Эсир. Эпĕ кунта ним те калаймастăп.***

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.)



## *ХАКЛĂРАН ТА ХАКЛĂ, ХИСЕПЛĔРЕН ТЕ ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!*

**Пурне те çывхарса килекен 2004 çул ячĕпе чĕререн саламлатăп. Çĕнĕ çул çĕнĕлĕх, ăнăçу илсе килессе, эпир ăна хавхаланупа, çутă та çирĕп шанăçпа кĕтсе илер. Çапла калама сăлтавĕ те çук мар. Иртен çул çăмăл пулмарĕ. Вăл кашни ĕçченĕн чăтамлăхĕпе пултарулăхне тĕрĕслерĕ, уйрăмах çĕр ĕçченне йывăр килчĕ. Апла пулин те, йывăрлăхсене çĕнтерсе умри тĕллевсене пурнăçа кĕртме пултартăмăр.**

**Промышленность, ял хуçалăх, сутуилӳ сферинче кăçал та çитĕнӳсем пур: продукци туса кăларасси, халăха кирлĕ тавар сутасси самаях ӳсрĕ, паянхи кунăн çивĕч ыйтăвĕсене тивĕçтерме май пачĕ. Иртен çул ялсене газификацилес, шкулсене компьютеризацилес, уйрăмах вĕсен пурлăх никĕсне пуянлатас, çурт-йĕр çĕклес, çул-йĕр сарас ыйтусем чи çивĕччисем пулчĕç. Çемье çулне тĕпе хурса ялти çамрăксем, çамрăк çемьесем тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пулма тăрăшрăмăр. Çитĕнӳсем те çук мар. Сирĕн тăрăшулăхпа чăтăмлăха тата пултарулăха пула районăн экономикипе социаллă пурнăçĕ аталанса пырать. Тунă ĕçсем куç умĕнчех. Пурнăçламалли татах та нумайрах.**

**Район экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕнче, тунă çитĕнӳсенче районти кашни ĕçченĕн тӳпи пур. Хăвăр суйласа илнĕ ĕçре ырми-канми тăрăшнăшăн чунтан тав тăватăп. Çитес çулта ăнăçлă ĕçлеме, çитĕнӳпе тупăш çулĕ çинче çирĕппĕн утма шанăç пур. Тулăх та тăнăç пурнăç хамăртан та нумай килет. Çакă сирĕнтен кулленхи ĕçре малашлăха шанса, яваплăха туйса, тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлеме хистет.**

**Хамăр енчен вырăнти халăхăн пурнăçне çăмăллатас тата лайăхлатас енĕпе малашне те тăрăшăпăр. Хаклă та юратнă ентешĕмĕрсем! Çĕнĕ çулта кашни çемьере хавхаланупа чăтăмлăх, çирĕп сывлăхпа таса юрату, ăнăçупа çитĕнӳ, иксĕлми телей пултăр.**

❋ ❋ ❋

**Çитес эрнере - Раштав уявĕ. Уяв ячĕпе кашни çемьене иксĕлми телейпе çутă шанăç, тăнăç пурнăç сунатăп.**

**Çамрăк ăрăвăн ĕмĕчĕсемпе тĕллевĕсем, аслă ăрăвăн шанчăкĕсем пурнăçланса пыччăр, малашлăхăр çутă та ырă килтĕр. Умри йывăрлăхсене çĕнтерме тӳсĕмлĕхпе вăй-хал, юратнă ĕçĕрте ăнăçупа çитĕнӳ пултăр.**

**А.КНЯЗЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

## КИВĔ ÇУЛА ĂСАТСА

**2003 çул вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. Кунсен шучĕ, вăхăчĕ пуриншĕн те пĕрех пулчĕ пулин те, кашни çыншăн, коллектившăн вăл хăйне евĕр иртрĕ. Мĕнлерех? Çакăнпа интересленсе эпир районти яваплă вырăнта ĕçлекенсенчен, предприятисемпе организацисен ертӳçисенчен хăшĕ-пĕрисене çакăн пек виçĕ ыйту патăмăр:**

**1. Иртсе каякан çул мĕнпе асра юлать?**
**2. 2004 çулта Эсир хăвăр ума мĕнле тĕллевсем лартнă?**
**3. Çĕнĕ çула ăçта тата кампа кĕтсе илесшĕн?**

**А.Е.ЕГОРОВА, район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ - экономика пайĕпе пурлăх управленийĕн пуçлăхĕ:**

1. Кăçалхи çул çанталăк условийĕсене пула ял хуçалăх предприятийĕсемшĕн çăмăл пулмарĕ, апла пулсан ял ĕçченĕсемшĕн те. Пĕрех районта çитĕнӳсем пур. Пысăк çитĕнӳсем. Ишлейре 2-мĕш район больници хута кайрĕ, унта çĕнĕ поликлиника çĕклесе лартрăмăр. Газификаци ĕçĕсем пыраççĕ. Район аталанать, малалла та çаплах пуласса шанатпăр.

Хам пирки каласан, кăçал маншăн пысăк парне пулчĕ. Ку вăл - мăнук çурални. Ăна хамăн юратнă атте ячĕпе Егор ят патăмăр.

2. Çитес çул республика Правительстви районa пысăк яваплă ĕç шанса пачĕ. Пирĕн Пĕтĕм Раççейри ялти спорт вăййисене ирттерме хатĕрлесе çитермелле. Хамăр пурăнакан тăрăха тирпей-илем кĕртесси кашнин тивĕçĕ.

Предприятисем вара малалла аталанасса шанатăп. 2004 çул валли бюджет йышăннă, килес çулхи инвестици программи анлă та тĕрлĕ енлĕ: газификаци те, çул-йĕр тăвасси те... Ял хуçалăх предприятийĕсемшĕн 2004 çул çăмăлрах пуласса ĕненес килет.

3. Çĕнĕ çула яланхиллех хамăн çемьепе, тăвансемпе, юратнă анне, Галина Васильевна Федорова, патĕнче, Апаш ялĕнче кĕтсе илесшĕн. Вăл пирĕн вăрçă ветеранĕ, эпир ăна уявра пĕччен хăварман. Пурне те Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.)

## *ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРЕЗИДЕНТНЕ ОРДЕНПА ЧЫСЛАНĂ*

Декабрĕн 25-мĕшĕнче Кремльте Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин Чăваш Республикин Президентне Николай Федорова «Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» III степень орденĕпе наградăланă.

1998 çулта ЧР Президентне «Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» IV степень орденĕпе чысланăччĕ. Кун пек наградăна вара пирĕн республикăран тата икĕ çынна - Шупашкарти «Элара» АУО генеральнăй директорне Г.Ильенкăна тата Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисткине, СССР халăх артисткине В.Кузьминана панă.

Халĕ вара Н.Федорова Раççей патшалăхне аталантарнине, çĕршыв ырлăхĕшĕн чылай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунине шута илсе пысăк наградăпа тивĕçтернĕ.

## *ÇУЛТАЛĂКĂН ĔÇ ПАТТĂРĔСЕМ*

Çĕнĕ çула кĕрес умĕн хыçа юлнă çулталăксен утăмĕсене пĕтĕмлетме май пур. Юлашки вунă çулта пирĕн республика аталанчĕ, çĕкленчĕ, илемленчĕ.

Иртнĕ эрнере Правительство çурчĕн Ларусен Пĕчĕк залĕнче Республика мухтавне ӳсĕмсемпе, çитĕнӳсемпе çирĕплетекенсен, хăйсен пултарулăхĕпе, пуçарулăхĕпе ĕçтешĕсене хĕмлентерекенсен ячĕпе чыслав иртнĕ. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Н.Партасова ЧР Президенчĕ ячĕпе Чăваш Енĕн маттур çыннисене - ĕç паттăрĕсене Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин патшалăх наградисемпе чысланă.

Наталия Юрьевна награда илнисене ăшшăн саламланă, вĕсем малашне те çĕнĕ çитĕнӳсемпе хаваслантарасса шаннине пĕлтернĕ.

# КИВĔ ÇУЛА ĂСАТСА

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.)

**Г.И.ЕГОРОВ, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн «Приволжское» вĕренӳпе сăнав хуçалăхĕн директорĕ, наука кандидачĕ:**

1. Иртнĕ çул пирĕн хуçалăх хăйĕн 70 çулхи юбилейне паллă турĕ. Хальхи вăхăтра экономика тĕлĕшĕнчен йывăртарах вăхăт пулин те хуçалăх экономика тĕреклĕхне çухатман, коллектив тикĕс ĕçлесе пырать, юбилей çулĕнче те эпир малти вырăнта пулни савăнтарать.

2. Çитес çул та ĕçре çĕнĕ технологисем кĕртесшĕн. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Данин пĕрлехи предприятийĕ кăларакан çĕнĕ сĕт пăрăхне вырнаçтарасшăн. Реконструкци 3 миллион тенкĕне ларать. Ăна пурнăçа кĕртсе сĕте çĕнĕ ГОСТ требованийĕсемпе ăсатма пултарасса, асăннă ял хуçалăх продукцине сутса тупăш илнин калăпăшне хальхи шайра хăварасса шанатпăр.

3. Çĕнĕ çула пĕрле ĕçлекенсемпе, юлташсемпе уявласшăн. Ăçта-и? Сĕтел хушшинче (В.И. - кулать).

Театра кайса килесшĕн.

**Н.А.ПЛАТОНОВ Ишлейри кирпĕч завочĕн директорĕ:**

1. Кăçал завод историйĕнче чи нумай кирпĕч çапса кăлартăмăр - 3 миллион та 415 пин штук. Рекорд тунине халĕ те хам та ĕненсе çитерейместĕп. Районти «Тăван Ен» хаçатăн мини-футбол турнирĕнче пирĕн предприяти команди хисеплĕ виççĕмĕш вырăн йышăнма пултарчĕ. Çакă та савăнтарать. Çатра Маркара пурăнакан рабочисене ĕçе тата ĕçрен турттарма микроавтобус туянтăмăр. Шоркка ялĕнчи клуба çут çанталăк газĕ кĕртсе патăмăр. халĕ кунти художество пултарулăх коллективĕн членĕсем кирек хăш вăхăтра та репетици ирттерме пултараççĕ.

2. Кирпĕч çапса кăларассине татах ӳстересшĕн. Типĕтекен цех туса хута ярасшăн - вара çулталăкĕпех кирпĕч кăларма пултараттăмăрччĕ.

3. Тăвансемпе тата çывăх çынсемпе, туссемпе Шоркка ялĕнче. Пичче, Владислав, 55 çул тултарать. Çак паллă куна пĕрле уявлăпăр.

## ХĔЛ МУЧИН ЮР ПĔРЧИЙĔ ЫЛТĂНРАН

**Кунран кун капăр чун,**
**Çĕн шăпа çуралать.**
**Çулран çул Çĕнĕ çул:**
**Хĕл Мучи çывхарать.**

**Ах, мĕншĕн-ши-ха Хĕл Мучин**
**Сивĕ пӳрчĕ те мунчи?**
**Тен, шур сухаллă Хĕл Мучин**
**Кучченеçĕ - Юр пĕрчи.**

**Чăвашри Кунран кун**
**Ачасемшĕн ыр кун**
**Чăвашри Çĕнĕ çул пур**
**темшĕн Мăн çул**

**Ах, мĕншĕн-ши-ха Хĕл Мучин**
**Кучченеçĕ пит пуян?**
**Тен, шур сухаллă Хĕл Мучин**
**Юр пĕрчийĕ - ылтăнран.**

**В.ВАСИЛЬЕВ.**

# ÇĔР АЙĔНЧИ ШЫВ ÇИНЕ КУÇĂПĂР

Пирĕн район центрĕ ĕçмелли шыва Шупашкартан илсе тăрать. Атăл шывне. Тĕрлĕ хутăшпа тасатнăскер сыпма тăрсан хлор тути калать. Унтан, унсăр пуçне вăл хаклă. Шыва хамăр патра илсе тăмалла тăвасшăн. Ку хальхи вăхăтра калаçу шайĕнчен куçнă ĕнтĕ. Геологи шыравĕн экспедицийĕпе килĕшӳ тунă, вĕсем вара хĕрсех ĕçлеççĕ. Мĕнле шайра вăл хальхи вăхăтра? Çак ыйту тавра пуçтарăнчĕç нумаях пулмасть район администрацийĕн ларусен залне. Канашлура геологсем отчет туса пачĕç. Унта Мускавран килнĕ С.В.Спектор геолог та, наука кандидачĕ, хутшăнчĕ. Экспедицин тĕп гидрогеологĕ Н.А.Тайбатров каланă тăрăх, июнь-август уйăхĕсенче 31 предприятин балансĕ çинчи 51 гидрогеологи скважинине комплекслă тĕрĕслев ирттернĕ. Шыва варалас хăрушлăх кăларса тăратакан 14 обьекта та пахаланă. Çапла вара скважинăсен санитарипе техника тăрăмне палăртнă. Сăмах май, районти пĕрремĕш çавăн пек шăтăка 1954 çулта алтнă, чи çĕнни - 2003 çулхи. Усă курманнисем те пур.

Кӳкеçе çăл шывĕпе тивĕçтермелле тăвасси çинчен йышăннă программăна пурнăçласа геологсем виçĕ участокра шыв шыранă. Кашнине ят панă: Йăршу, Хĕвелтухăç тата Вăрман участокĕсем. Пĕтĕмпе 11 скважина алтнă. Вĕсенчен 7-шĕ шыв шырамалли тĕллевлĕ, пĕри - тĕпчемелли, тепри тĕпчев тата усă курмалли скважина. Хĕвелтухăç участокра Кӳкеçе тивĕçтермеллĕх щыв çук-мĕн. Йăршу патĕнчи шывра тимĕр, бор нумай тата вăл шыв хытă. Вăрман участокĕнчин пахалăхĕ лайăхрах.

Çапла геологсем ĕçĕн пĕрремĕш тапхăрне пурнăçланă. Малалла тимлеме вĕсем шывпа тивĕçтерессин схемине палăртма ыйтаççĕ, çĕр лаптăкĕн статусĕн ыйтăвне те татмалла.

Канашлăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - капиталлă строительствăпа çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.М.Сидоров ертсе пычĕ.

**В.ЭВЕРККИ.**

# РАЙОНĂН ПУЛАСЛĂХĔ ПЫСĂК

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.)

**Çапах та пĕр канăççăр ыйту пур манăн. Çакăн чухлĕ стройка тăватпăр пулин те райадминистраци ĕçченĕсем тахçан вăхăтлăха вырнаçнă «хăна килĕ» пулмалли çуртрах тăрăшаççĕ. Питĕ хĕтсĕр-çке вăл. Килен-каякансем умĕнче те аван мар. Республикăри журналист юлташсем те пĕрре мар тĕксе каланă мана кун пирки...**

**Кăна илтсен район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П.Князев мана çитес çулсенче районта пулмалли пысăк улшăнусемпе паллаштарчĕ. Чи малтан вăл - Кӳкеç витĕр тухакан федераци пĕлтерĕшлĕ аслă çула Кӳкеçрен илсе тухасси. Ку проект пĕр миллиард тенкĕ тăрать. Ĕ ç çитес çул тытăнмалла. Проекчĕ хатĕр, вăл мĕнле каясси паллă. Çавăн пекех генеральнăй план тăрăх поселок центрне те Советски урамне куçармалла-мĕн. Урăхла каласан, районăн чи пысăк ертӳçи пĕлтернĕ тăрăх çитес çулсенче пирĕн территори пысăк улшăнусемпе пуянмалла. Апла пурăнма та нумай интереслĕрех пулать.**



Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

**Çулталăк хушшинче хута янă поликлиника.**

**Калаçура ытти нумай темăна, çав шутра иртнĕ суйлавсем çинчен те хускатнăччĕ. Пуçлăх пурин çине те тивĕçлĕ хуравсем пачĕ. Вĕсемпе, паллах хамăрăн ытти материалсенче усă курăпăр. Анчах кунта вăл: «Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илетĕр?» ыйту хуравне илсе кăтартмасăр пултараймастăп.**

- Пирĕншĕн уявсем яланах икĕ хут нумайрах канăçсăрлăх, ĕç илсе килеççĕ. Хăвăрах пĕлетĕр, хальхи вăхăтра тĕрлĕ хăрушлăх çинчен манма юрамасть. Çавăнпа та эпĕ ертӳçĕсене те, уйрăм çынсене те хам енчен асăрхануллă пулма чăнсе каласшăн. Çĕнĕ çула вара çемьере тăвансем хушшинче кĕтсе илме тăрăшăп.

***- Черкке йăтатăр пульха?***

- Эпĕ шампанскине ĕçместĕп, «сухое вино» текеннине çĕклетĕп паллах.

***- Çĕнĕ çул ячĕпе мĕн суннă пулăттăр?***

- Чи малтан мир, килĕшӳ, пĕр-пĕрне ăнланни, урă пурнăç пултăр. Ĕç, ăс-тăн çинчен ас тусах тăрар. Çӳлтен никам та пирĕн çине манна кĕрпи çутармасть. Хамăрăн çемьесене хамăрăнах тăрантармалла. Оптимизма çухатма юрамасть. Ман шутпа, пирĕн районăн анчах мар, çĕршывăн та пуласлăх пур тата вăл çутă. Пурне те вăй-хал, çирĕп сывлăх, телей сунатăп.

**В.СОРОКИН калаçнă.**

«Тăван Ен» саламĕ

# *МАЛАЛЛА ТА УТАР ПĔРЛЕ*

**Çĕнĕ çул ĕлки умне тăриччен пирĕнтен кашниех хыçа, историе юлакан çул мĕн панине, иртнĕ тапхăрта мĕн туса ĕлкĕрейменнине шута илсе çĕнĕ çулта çĕнĕлле, лайăххипе çеç пурăнма тĕллев лартать. Пур чухне те хамăр ĕмĕтленнĕ пек çеç пурăнма май килмесен те юлташсемпе, çывăх çынсемпе пĕрле пулни нумай пулăшу парĕ. Пуянлăх енĕпе хальлĕхе питех мухтанма пултараймастпăр пулин те районта пурăнакансенчен нумайăшĕ тĕрлĕ пичет кăларăмĕсене сахал мар çырăнса илет, çав шутра районта тухса тăракан «Тăван Ен» хаçата та.**

**Хамăр районти пичет кăларăмĕ вăл - кунта пурăнакансемшĕн вĕсен тусĕсенчен, юлташĕсенчен пĕри пулнине нумайăшĕ лайăх ăнланать, Паллах вăл алла тӳрех çăкăр татти тыттармасть, пысăк пĕлӳ те памасть, анчах та унăн кашни номерне вуласа пыракан çын хăй сисмесĕрех, пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарăннă пек хăйне кирлĕ чун апачĕ илет.**

**Вулакансем хушшинче хисеплĕ ватăсемпе пĕрлех шкул ачисем те сахал мар пулнине палăртма кăмăллă. Вĕсен пултарулăхĕпе халĕ ятарлă страницăсем те тухаççĕ.**

**«Тăван Ене» чунтан парăннă, унăн шăпишĕн пăшăрханакансем сахал марри редакци коллективĕн кăмăлне те çĕклет, хаçатăн пахалăхне ӳстерме пулăшать. Ф.К. Константинов (Кипеккасси), А.Ф.Федоров (Хĕрлĕсыр), А.З.Ефимова (Тăрăн), М.К.Константинов (Юртукасси), А.И. Иванов (Улатăркасси) тата ыттисем те пирĕн хаçатпа вун-вун çул туслă. Вулакан вĕсен статйисене хаçатра час-часах тĕл пулать.**

**Пичет кăларăмне вулакан патне çитересси те юлашки вăхăтра кăткăсланчĕ. Почтальонсен ĕçне те çăмăл теме çук. Тавтапуçах вĕсене тăрăшулăхĕшĕн.**

**Хаçат çырăнтарас ĕçе пенсионерсене укçа валеççе çӳрекен пенси фончĕн сотрудникĕсем пулăшнине палăртма кăмăллă. Кӳкеçри издательство çурчĕн специалисчĕпе Г.Е.Пономаренкопа пĕрле фонд специалисчĕсем: Р.Дьяконова, В.Григорьева, Е.Иванова, Т.Матвеева, Л.Павлова, Л.Майорова, И.Васильева, Е.Михайлов, М.Парандеева, А.Иванова, К.Красавцева, В.Одинцова, Т.Васильев, А.Иванов, А.Яковлев тата А.Титов тăрăшнă.**

**Хаçат вулакансемпе унта çырса тăракансене, çыхăну уйрăмĕсенче вăй хуракансене тата хаçата сарас ĕçе хутшăннă пенси фончĕн специалисчĕсене Çĕнĕ, 2004 çулпа ăшшăн саламлатпăр. Телейлĕ пурнăç, çирĕп малашлăх, кил ăшши те тăнăç пурнăç илсе килтĕр умри çул.**

**РЕДАКЦИ.**

# ВĔРЕНТЕКЕНСЕН ПРОФСОЮЗĔН - ÇĔНĔ ЕРТӲÇĔ

Районта вĕрентӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюз председателĕсен суйлавпа отчет (черетсĕр) конференцийĕ пулса иртрĕ.

Кун йĕркинче икĕ ыйту пăхса тухрĕç. Районти профсоюз организаци председателĕн пĕтĕмлетĕвĕ тата вĕрентӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюз организацийĕн ертӳçин суйлавĕ. Районти профсоюз организацийĕн председателĕ З.Н.Степанова отчетлă тапхăрта туса иртернĕ ĕçсемпе паллаштарчĕ, çитĕнӳсене палăртрĕ, çитменлĕхсем çинче те чарăнса тăчĕ, финанспа çыхăннă ыйтусене тишкерчĕ, уçăмлăх кĕртрĕ.

Доклада сӳтсе явма Кӳкеçри лицей профком председателĕ М.Н.Николаева, Тутаркассинчи вăтам шкул директорĕ И.М.Григорьев, «Колосок» ача сачĕн заведующийĕ Е.В.Тихонова, Явăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти профком председателĕ Г.И.Журавлев, районти вĕрентӳ управленийĕн ертӳçи Г.В.Николаев, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.А.Константинов, Ишекри вăтам шкулти профком председателĕ Т.В.Фомирякова хутшăннă. Профсоюз ĕçне «тивĕçтерӳллĕ» хак панă. Нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Зинаида Николаевна парнесене тата ырă, ăшă сăмахсене тивĕçрĕ.

З.Н.Степанована республикăри профсоюз организацине ĕçлеме куçарнă май районти профсоюз организацийĕн председателĕ пулма усçăн сасăласа Янăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул директорне Геннадий Леонидович Васильева çирĕплетнĕ.

**А.ЕФИМОВА.**

# АЧАСЕНЕ ХАПĂЛ ТĂВАÇÇĔ

«Asio» экологи клубĕ кăçалхи çул та сахал мар ĕç турĕ. Вăл пулăшнипе чылай ача хăйĕн пушă вăхăтне усăллă ирттернипе пĕрлех тăван çут çанталăка юратма, ăна хаклама хăнăхать.

Клубăн пуян фотоматериал. Унта экскурсисемпе экспедицисене сăнланипе пĕрлех çут çанталăкăн хăйне евĕр вырăнĕсене, сайра тĕл пулакан ӳсен-тăрансемпе чĕр чунсене курма пулать. «Asio» кăçал çак материала районти шкулсенче вĕренекенсене те кăтартрĕ. 19 учрежденири 3400 ача чунтан кăсăкланса паллашрĕ.

Тăван енĕн çут çанталăкне пĕлекенсене ятарлă конкурса явăçтарчĕç. Мероприяти биологипе экологи облаçĕнче ачасен пĕлĕвне анлăлатать, пĕр шухăшлисемпе пĕр тĕллевлисене пĕтĕçме те пулăшмалла.

«Экоша» информаци вестникĕ тухса тăнипе пĕрлех çут çанталăка тĕпчеме пуçлакансем валли методика кăтартăвĕсем пичетлеме пуçларĕç. Пĕрремĕшне сырăшри кайăксене халалланă, иккĕмĕшĕнче сывлăш тасамарлăхне мăк курăпе усă курса палăртма вĕрентнĕ.

«Экоша» куçăмсăр шкул уçни çамрăк экологсен йышне ӳстерме пулăшать. Заняти Çĕньял Покровскинчи, Чăрăшкассинчи вăтам шкулсенче тата ачасен пултарулăх центрĕнче иртет. Уйăхра - пĕрре. Тӳлевсĕр. Ку шкула çӳрекенсенчен чи пултаруллисем «Asio» клубăн тĕпчев ушкăнне лекме пултараççĕ. Хăйсене панă ĕçсене лайăх туса нумай бал пухнисем тăван ен тăрăх похода кайĕç, уйрăмах матуррисене çуллахи вăхăтри темиçе куна пыракан тĕпчев экспедицийĕ кĕтет.

«Asio» клуба çӳрекенсем кăçал та экспедицире пулнă. Вĕрентӳпе тĕпчев тĕллевĕллĕ çак мероприятие хутшăнма тивĕç пулнă 14 ача (вĕсем 4 шкултан) Чăваш Енĕн ӳсен-тăранпа чĕр чун тĕнчине вунă кун тĕпченĕ.

Килес çулта çĕнни, интересли чылай пулĕ. Вĕсенче кăмăл пуррисем пурте хутшăнма пултараççĕ. Клуб ертӳçи А.А.Яковлев калашле, клубăн палăртса хуни, шухăш-ĕмĕчĕ нумай, планĕсем - наполеонла. Апла пулсан, вăрах пуç ан ватăр, ачасен пултарулăх центрне васкăр.

**В.ТИТОВА.**

Ыйту - хурав

# НАЛУКА ПĂРАХĂÇЛАНИ ХАК ЙӲНЕЛНИНЕ ПĔЛТЕРМЕСТ

***Сутлăхран илекен налука çитес çултан тӳлеме пăрахаççĕ тенине илтнĕ. Çакă тавар хакĕ 5 процент йӳнелессине пĕлтерет-и?***

**И.ИВАНОВА.**

Çак ыйтăва РФ Налуксемпе сборсен министерствин Чăваш Республикинчи 5-мĕш инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.Ф.Демидова çапла хуравларĕ:

- Саккунта тавара йӳнетесси пирки каламан, çавăнпа та хака чакарасси суту-илӳ предприятийĕсен хăйсен ирĕкĕ.

**В.ИВАНОВА кăсăкланнă.**



# ТĂВАН ЕН






| | ЯНВАРЬ | ФЕВРАЛЬ |
|---|---|---|
| пн | 5 12 19 26 | 2 9 16 23 |
| вт | 6 13 20 27 | 3 10 17 24 |
| ср | 7 14 21 28 | 4 11 18 25 |
| чт | 1 8 15 22 29 | 5 12 19 26 |
| пт | 2 9 16 23 30 | 6 13 20 27 |
| сб | 3 10 17 24 31 | 7 14 21 28 |
| вс | 4 11 18 25 | 1 8 15 22 29 |

| | МАРТ | АПРЕЛЬ |
|---|---|---|
| пн | 1 8 15 22 29 | 5 12 19 26 |
| вт | 2 9 16 23 30 | 6 13 20 27 |
| ср | 3 10 17 24 31 | 7 14 21 28 |
| чт | 4 11 18 25 | 1 8 15 22 29 |
| пт | 5 12 19 26 | 2 9 16 23 30 |
| сб | 6 13 20 27 | 3 10 17 24 |
| вс | 7 14 21 28 | 4 11 18 25 |

| | МАЙ | ИЮНЬ |
|---|---|---|
| пн | 3 10 17 24 31 | 7 14 21 28 |
| вт | 4 11 18 25 | 1 8 15 22 29 |
| ср | 5 12 19 26 | 2 9 16 23 30 |
| чт | 6 13 20 27 | 3 10 17 24 |
| пт | 7 14 21 28 | 4 11 18 25 |
| сб | 1 8 15 22 29 | 5 12 19 26 |
| вс | 2 9 16 23 30 | 6 13 20 27 |

| | ИЮЛЬ | АВГУСТ |
|---|---|---|
| пн | 5 12 19 26 | 2 9 16 23 30 |
| вт | 6 13 20 27 | 3 10 17 24 31 |
| ср | 7 14 21 28 | 4 11 18 25 |
| чт | 1 8 15 22 29 | 5 12 19 26 |
| пт | 2 9 16 23 30 | 6 13 20 27 |
| сб | 3 10 17 24 31 | 7 14 21 28 |
| вс | 4 11 18 25 | 1 8 15 22 29 |

| | СЕНТЯБРЬ | ОКТЯБРЬ |
|---|---|---|
| пн | 6 13 20 27 | 4 11 18 25 |
| вт | 7 14 21 28 | 5 12 19 26 |
| ср | 1 8 15 22 29 | 6 13 20 27 |
| чт | 2 9 16 23 30 | 7 14 21 28 |
| пт | 3 10 17 24 | 1 8 15 22 29 |
| сб | 4 11 18 25 | 2 9 16 23 30 |
| вс | 5 12 19 26 | 3 10 17 24 31 |

| | НОЯБРЬ | ДЕКАБРЬ |
|---|---|---|
| пн | 1 8 15 22 29 | 6 13 20 27 |
| вт | 2 9 16 23 30 | 7 14 21 28 |
| ср | 3 10 17 24 | 1 8 15 22 29 |
| чт | 4 11 18 25 | 2 9 16 23 30 |
| пт | 5 12 19 26 | 3 10 17 24 31 |
| сб | 6 13 20 27 | 4 11 18 25 |
| вс | 7 14 21 28 | 5 12 19 26 |

## ЦЕРКОВНЫЙ КАЛЕНДАРЬ - 2004

### В ЭТИ ДНИ КАЖДЫЙ ГОД:

7.01 - Рождество Христово
19.01 - Крещение Господне
15.02 - Сретение Господне
7.04 - Благовещение Пресвятой Богородицы
19.08 - Преображение Господне (Спас)
28.08 - Успение Пресвятой Богородицы
21.09 - Рождество Пресвятой Богородицы
27.09 - Воздвижение Креста Господня
4.12 - Введение во храмы Пресвятой Богородицы

### ПЕРЕХОДЯЩИЕ ПРАЗДНИКИ:

4.04 - Вход Господень в Иерусалим. Вербное воскресенье
11.04 - Пасха Христова
20.05 - Вознесение Господне
30.05 - День Святой Троицы
31.05 - День Святого Духа

### ВЕЛИКИЕ ПРАЗДНИКИ:

8.01 - Собор Пресвятой Богородицы
14.01 - Обрезание Господне
22.05 - Перенесение мощей святого Николая
7.07 - Рождество Иоанна Предтечи
12.07 - Апостолов Петра и Павла
11.09 - Усекновение главы Иоанна Предтечи
14.10 - Покров Пресвятой Богородицы
21.11 - Собор Архистратига Михаила

### МНОГОДНЕВНЫЕ ПОСТЫ:

| | |
|---|---|
| Великий пост | 23 февраля - 10 апреля |
| Петров пост | 7 июня - 11 июля |
| Успенский пост | 14 августа - 27 августа |
| Рождественский пост | 28 ноября - 6 января 2005 года |

### ДНИ ОСОБОГО ПОМИНОВЕНИЯ УСОПШИХ:

| | |
|---|---|
| Суббота мясопустная | - 14 февраля |
| 2-ая суббота Великого поста | - 6 марта |
| 3-я суббота Великого поста | - 13 марта |
| 4-ая суббота Великого поста | - 20 марта |
| Радоница | - 20 апреля |
| Суббота троицкая | - 29 мая |
| Суббота Димитриевская | - 6 ноября |

# ТИВĔÇЛИСЕНЕ ОРДЕН

Чернобыль хулинче пулса иртнĕ пысăк инкек пирĕн çĕршыва сахал мар сиен кӳчĕ. Кунта пултарулăхпа хăюлăх кăтартнă кашни çын халăх асĕнче. Май килнĕ таран вĕсене патшалăх тĕрлĕ çăмăллăхсем пама тăрăшать.

Районти агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи уявĕнче Чернобыльти пăтăрмаха сирес тĕллевпе тăрăшнă В.В.Трофимова, Ю.М.Алексеева, В.Л.Егорова, Н.Д.Иванова, И.И.Комарова, И.К.Кузьмина тата Н.П.Назарова Раççей Президенчĕн Указĕпе кӳлĕшӳллĕн Паттăрлăх орденĕпе наградăланă.



В.ТРОФИМОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

**✿ Республикăри Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ, ял хуçалăх министрĕ М.В.Игнатьев, район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П. Князев тата районти çар комиссарĕ А.А.Кочуров Н.П.Назарова орден илнĕ ятпа саламлаççĕ.**

Вăя, сывлăха шеллемесĕр çак инкеке сирсе яма пулăшнă хисеплĕ çыннăмăрсене награда илнĕ тата Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр.

**П.ПАВЛОВ.**

## *ДЕПУТАТĂН ТАВ ÇЫРĂВĔ*

Çĕнĕ Çул умĕн РФ Патшалăх Думин депутатĕнчен А.Г.Аксаковран уншăн сасăланă тата ĕçленисенчен нумайăшĕ тав çырăвĕ илчĕ. Унта вăл суйлав тапхăрĕнче унпа пĕрле пулнăшăн чĕререн тав тăвать. «Эсир пулăшнипе,- тет вăл асăннă çырура,- мана суйлавçăсем каллех шанчĕç. Анчах çакăнпа лăпланса ларма, савăнма вăхăт та, сăлтав та çук. Умра - пысăк та ответлă ĕçсем, çынсен шанăçне тӳрре кăларасси. **Тăван Чăваш Еншĕн малашне те сирĕнпе пĕрле ĕçлессе шанатăп».**

# ÇĔНĔ ÇУЛ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАМА

Çак кунсенче Шорккари культура çурчĕ çумĕнчи «Туслăх» фольклор ансамблĕ хăйĕн пысăк концерчĕпе Кӳкеçри ветерансен çуртĕнче пурăнакансем патне пырсан артистсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕç, ăсатса янă чухне те çавăн пекех пулчĕ.

Тĕл пулура фольклор ушкăн членĕ тата Шорккари ваттисен çуртĕнче вăй хуракан Л.В.Майорова çурт директорне З.М.Титована çурхи çăмран çыхнă ăшă кĕске чăлха парнелерĕ.

**В.ЖУРАВЛЕВ.**

# СЫХЛАНУЛĂХ ПĂСМАСТЬ

Раççейри Шалти ĕçсен министерствин пуçарăвĕпе ку тапхăрта «Вихрь-антитеррор» операци иртет. Пирĕн республикăра вăл декабрĕн 18-мĕшĕнче пуçланнă, районта та çаплах.

Çак ыйтупа декабрĕн 24-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ А.П.Князев вырăнти администраци, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пуçлăхĕсемпе, милици работникĕсемпе ятарлă канашлу ирттернĕ. Çак вăхăтра асăрханулăха татах вăйлатмалла. Путвалсемпе мачча çийĕсене лайăх питĕрмелле, паллă мар темĕнле чăрка е япала асăрхасан тӳрех милицине е ял, поселок администрацине пĕлтермелле.

Çак операци тӳрĕ мар чунлă çынсене тăрă шыв çине кăларма та пулăшать. Нумаях пулмасть авă милици работникĕсем 30 пин тенкĕлĕх ытла магазин çаратнă вăрăсене тытса чарнă.

Асăрханулăх никама та пăсмĕ.

**П.ПАВЛОВ.**

## Ăшшăн саламлатпăр



Ишлей ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăр - Галина Михайловна ПЕТРОВА январĕн 2-мĕшĕнче 60 çул тултарать. Çак ятпа эпир ăна чунтан-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Халĕ вăл тивĕçлĕ канура пулин те хăйĕн юратнă ĕçне пăрахман-ха. Эпир ăна ырă кăмăлĕшĕн, яланах пулăшма хатĕр пулнишĕн тав тăватпăр. Малашне те пире савăнтарма сирĕн чунăрта вăй-хал тапса тăтăр.

Салампа - мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, вĕсен ачисем,

Кӳкеçре пурăнакан акăшĕпе йыснăшĕ, вĕсен ачисем.

## ТУСЛĂХ ПУЛТĂР ЯЛАНАХ

### Сăввипе кĕвви Владимир Васильевăн



1. Кам илтмен-ши пурнăçра
Ылтăн сăмах - Туслăх?
Ăнлану вăл - ăс-пуçра,
Мĕльюн кĕмĕл пуслăх.
Туслăх, эсĕ паллашу,
Туйăм, ырату.
Туслăх, эсĕ пулăшу,
Сывлăх, юрату.

2. Пире пачĕ пĕрлешӳ,
Çамрăклăх эмелĕ.
Туслăх - тачă килĕшӳ,
Кăмăл майлă, меллĕ.

3. Юрă-ташă, вăйăсем
Чуна илĕртеççĕ.
Ăмăртуллă ыр ĕçсем
Ăс, вăй-хал кӳреççĕ.

4. Суяна та ултава
Таптать хытă-хытă:
Чăнлăхпа çеç юнашар
Илем кӳрсе пытăр.

5. Чыс, хисеп, мухтав сана,
Ӳс, «Туслăх» ансамблĕ.
«Халăх тусĕ» тенĕшĕн
Пур çын та ăмсанĕ.

✵ Гороскопа ĕненекенсем валли

# ÇĔНĔ ÇУЛТА МĔН КĔТЕТ?

**2004 çула Кăвак Упăте тата Венера тытса тăрĕç. Кăвак тĕс - йывăç символĕ. Йывăç хăвачĕ çынсене пурнăçри çул-йĕре суйласа илме пулăшĕ. Упăте çулĕнче тĕрлĕ кĕтменлĕх пулма пултарать. Вăл е ку ыйтупа хăвăрт йышăну тума пултаракансене ăнăçу кĕтет тесе ĕнентерет Николь Буря астролог.**

**Халĕ кашни Зодиак паллине мĕн кĕтнипе кĕскен паллашар-ха.**



**Сурăхсен** çуркунне ӳрĕк-сӳрĕклĕхрен асăрханмалла. Çулла, май пулсан, тинĕс хĕрне е ют çĕршыва кайма юрать. Пухнă вăй-хăватăрпа кĕркунне ĕçĕрсене тума пуçлăр. Чăтăмлăрах пулма тăрăшăр. Çывăх çыннăрсемпе пули-пулми тавлашăва ан кĕрĕр, çитменнине тата мăшăрсен хушшинче кăткăслăх сиксе тухма пултарать.



**Вăкăршăн** çулталăк йывăр килет, анчах аптăрамăр. Çуркунне çĕнĕ ĕç пуçлама тăхтăр. Планăра лайăх шухăшласа палăртăр. Çулла сĕнекен ĕçе килĕшмесен аван. Япăххисĕр пуçне вăл сире ним те памасть тесе асăрхаттарать астролог. Отпускра лайăх канма тăрăшăр: кĕркунне нумай ĕçлеме тивĕ. Çак çул сире юратура та ăнмалла.



**Йĕкĕрешсемшĕн** çулталăк йывăр пулĕ. Пурлăхпа çыхăннă ыйтусемпе уйрăмах асăрханăр. Июль уйăхĕнче пысăк укçа çухатассинчен тимлĕ пулăр. Кĕркунне инçе командировкăсем кĕтме пултарĕç. Çулталăк вĕçĕнче улшăнусем туса ирттерме ан васкăр. Илĕртӳллĕ курăнни ытарайми пулнине пур чухне те пĕлтермест.



Укçа-тенкĕ ыйтăвне лайăхлатассишĕн **Ракăн** сахал мар тар тăкмалла. Çуркунне, тен, таçта куçса кайма тивĕ. Июнь уйăхĕнче сывлăхăр тĕлĕшпе асăрханмалла, июльте - хирĕçтăруран. Августра каннине ним те çитмĕ. Сентябрь уйăхĕнче йăлтах хăй вырăнне ларĕ. Партнерсен тӳрĕлĕхне ĕненме ноябрьте тăхтăр. Çулталăк вĕçĕнче юратура мыскарасем пулса иртĕç.



**Арăсланшăн** 2004 çул финанс, пултарулăх ĕç-хĕлĕн, карьера, политика тата бизнес ыйтăвĕсене не татма питĕ лайăх. Çуркунне тунă килĕшӳсем ăнăçлă. Отпуска май уйăхĕнче ирттерсен аванрах. Çулла ĕçĕрсемпе аппаланăр. Кĕр - çул çӳреме тата çыхăну тытма лайăх вăхăт. Хăш-пĕр каварсене шутламасан, çулталăк вĕçĕ ăнăçлă. Ĕç кăмăла çĕклет, юратура йĕркеллĕ.



**Хĕршĕн** çак çул авторитет, ăнăçу, партнерсемпе тытакан çыхăну, юрату, ачасен ыйтăвĕсем малта пулĕç. Чылай вăй хума тивет. Кĕр пуçламăшĕнче юлташăрсем, тăванăрсемпе çывăх çыннăрсем хăйсен ыйтăвĕпе тинке илĕç. Лайăх шухăшласа тунă ноябрьти килĕшӳ тупăш кӳрĕ. Декабрьте такампа ăнсăртран çыхăнăва кĕресрен тата çул çинче паллашасран асăрханăр. Ачасемпе уйрăмах тимлĕ пулăр.



**Тарасана** çулталăк пуçламăшĕнче ĕçре улшăну кĕтме пултарать. Çак тапхăрта пултарулăх тата ăс-хакăл енчен ӳсме вырăнлă. Çуркунне хăшĕсен ĕçе çеç мар, пурăнакан вырăна та улăштарма тивĕ. Апрель-сентябрь уйăхĕсенче тухса çӳремеллисем пулĕç. Хăвăр пурнăçăрта - мыскарасем, çĕнĕ паллашусем. Кĕркунне пуçлăхăрсемпе кăткăсрах хутшăну кĕтме пултарать, анчах çулталăк вĕçне йĕркеленсе кайĕ.



**Скорпиона** çулталăк пуçламăшĕнче ăнăçлă çул çӳрев, юратура ăнăçу, юлташсен пулăшăвĕ, парне кĕтет. Çуркунне вара ыйтусем сиксе тухма пултараççĕ, сывлăхăр хавшас хăрушлăх та пур. Çулла каллех ăнăçлă. Кĕтмен ыйтусемпе тăванăрсем кансĕрлемесен ноябрь уйăхĕнче яланлăха чикĕ леш енне кайăр. Декабрьте вăрăсенчен сыхланмалла.



Савăнăç хыççăн - кăмăлсăрлану. Çапларах пулĕ çулталăк пуçламăшĕ **Ухăçăн.** Бизнеспа аппаланакансемшĕн çак сăмахсем уйрăмах вырăнлă. Çуркунне партнерсемпе тата савнă çыннăрсемпе ыйтусем сиксе тухĕç, çурçӳченех асапланма тивĕ. Кутăнлăхăра чакарăр. Çавăн иккĕмĕш çурринче интереслĕ паллашу, тен, пулĕ. Вăл вара ĕçре е юратура ăнăçу кӳрĕ. Сентябрьте тупăш кĕтет. Ноябрьтен ĕççем йĕркеленсе кайĕç.



**Ту качакине** ĕçре ăнăçу кĕтет. Тен, ĕç укçи хăпарĕ. Çак çул хăвăр ĕмĕтĕрти çынна тĕл пулăр. Çулталăкăн малтанхи çуррине ачасене халаллăр. Çулла çул çӳреме лайăх вăхăт, çак вăхăтра юратура тата пултарулăхра ăнĕ. Кĕркунне сывлăхăра çирĕплетесси пирки мерăсем йышăнăр.



**Шывтăканшăн** çулталăк пуçламăшĕ канлĕ мар, анчах эсир аптрамăр. Çуркунне темĕнле мыскара кĕтет. Çулла тĕплĕ йышăну тума кирлĕ мар. Кĕркунне ĕç хушăнĕ. Тен, хăвăр квалификацие ӳстерме, куçман пурлăхпа çыхăннă ыйтусене татма лекĕ. Октябрь тата ноябрь уйăхĕсене палăртнă çулçӳреве кайма май килмессе те пултарать, пысăк укçана хывнин уссине кураймăр. Укçăра та, пурлăхăра та перектлĕр. Декабрьте ăнăçу кĕтет.



**Пулăсен,** ахăртнех, пĕлĕве ӳстерме тивĕ. Çулталăкăн малтанхи çурринче ĕçре ăнăçу кĕтĕ. Январь-март уйăхĕсенче пысăк укçа килме пултарать. Анчах ăна май тата июнь уйăхĕнче тăкаклама тăхтăр. Ачăрсемпе çулталăкĕпех кăмăлсăрланма тивĕ, анчах нимĕн те улăштараймăр. Отпуска килтен аякра ирттерĕр. Кĕркунне çывăх çыннăрсемшĕн тăрăшма тивĕ. Декабрьте усăллă улшăнусем пулма пултарĕç.

**В.ТИТОВА хатĕрленĕ.**


## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ



Дорогие ветераны войны и труда, пенсионеры, районный совет ветеранов войны и труда поздравляет всех вас с наступающим Новым 2004 годом, Рождеством Христовым!

Желает в Новом году крепкого здоровья на долгие годы, счастья, оптимизма.

И.ПАВЛОВ, председатель районного совета ветеранов войны и труда

Продаю шифер, цемент, сруб, мох, керамблок с доставкой без выходных (село Ишлеи). Тел.: 3-15-85.




ОАО «Управление Кугесьстрой» предлагает в аренду: помещения под офис, неотапливаемые складские помещения и гаражи, стоянку автомобилей всех марок на открытой площадке. п.Кугеси, ул.Шоссейная, 3. Т.: 2-16-51.


Хаçатăн çитес номерĕ январĕн 9-мĕшĕнче тухать.


ТĂВАН ЕН
("КРАЙ РОДНОЙ")
Чебоксарская районная газета

Учредители:
ГУП "Кугесьский издательский дом"
Мининформполитики ЧР,
Министерство печати и информационной политики Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

( Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, компьютерный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП "КуИД" Мининформполитики Чувашии. Тел./факс: (8240) 2-13-83. E-mail: print@chebs.cap.ru

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру П.И.ПАВЛОВ

Печать офсетная. Объем 1,5 печ. лист. Номер подписан в печать: 9.12.2003 г. в 16 час. 00 мин. Заказ №2862. Тираж 1685. Индекс газеты - 54820.